Мартăн 8-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ

Хулара çуралнă, ялта телей тупнă

Хĕрарăм ал ĕçне тума пĕлнипе пултаруллă. Ку ĕлĕкренпех çапла. Вăхăт улшăнать, анчах пурнăçри йăлайĕркесемпе хаклăлăхсем тĕппипех пĕтмеççĕ-ха. «Хĕрарăм ĕçĕ, арçын ĕçĕ» тенине халĕ ытлах уйăрмастпăр. Çапах та мунча хутма вутă çурса хатĕрлени арçыннах килĕшет, тĕрĕ туни вара – хĕрарăма килĕшӳллĕрех.

Шăпах тĕрĕ маçтăрĕ пирки пуçлас тетĕп те уяв умĕн хамăн сăмахăма. Ирпе ĕçе кайиччен «пĕр виçĕ рет те пулин» тĕрлесе хăвараканскер, каçпа та, мĕнле те пулин вăхăт тупсах, çывăрма выртиччен тĕрĕ тăваканскер пирки.

Шупашкар хулинче çуралса ӳснĕ Елена. 3 № шкулта чи активлисенчен пĕри пулнăскер, пионерсен пӳлĕмĕнчен те тухма пĕлмен хĕр ача. Шкул пĕтерсенех çамрăк хĕрĕн куçĕсене операци тумалла пулса тухать. Операци хыççăн вара икĕ уйăх хушши вулама та, çырма та юраман. Çак реабилитаци тапхăрĕ вĕçленсен çеç Елена повара вĕренсе тухать. Анчах маларах килĕшнĕ ĕç кăмăла юрăхлă пулмасть. Хыççăн çĕвĕçĕ ĕçне алла илет. Вăхăт вара ку ĕçпе те кăмăл тулманнине кăтартса парать...

Ваçкассинче çуралнă каччăпа паллашни, кайран вара унпа пĕрле çемье çавăрни те Аленăн (ытларахăшĕ ăна çапла чĕнеççĕ) пурнăçне тĕпренех улăштарать. Çапла хула хĕрĕ Турă çырнипе пĕрле хăйĕн ĕмĕтне те пурнăçа кĕртет – вăл мĕн пĕчĕкренех ялта пурăнас ĕмĕтлĕ пулнине нихăçан та никамран та пытарман. Чăвашла каласма та часах вĕренсе çитет вырăс хĕрарăмĕ.

Кавча килсен упăшкипе пĕрле «Ударника» çĕр улми пуçтарма кайнă вăхăта паян та манмасть-ха Алена. «Пĕр рете ултшар çын тăмаллаччĕ. Пĕрисенчен: «Пире хăвăрпа пĕрле тăрататăр-и?» – тесе ыйтсан «Ку майраран ĕçлесси пулать-и вара?» – терĕç. Хам ăшра: «Кăтартатăп-ха сире «майра», – тесе шутларăм. Пĕртте кая юлмарăм», – аса илет паян Ваçкасси кинĕ.

Хĕрарăм ĕçченлĕхĕ, сăпайлăхĕ «майра» пулнинче мар çав. Ялти хăш-пĕр хĕрарăмсем тепĕр майрасенчен те çĕр хут кахалрах. Аленăпа мăшăрĕ вара выльăх-чĕрлĕхне те картиш туллиех усранă. Ĕне сăвасси те, сыснасене апат парасси те, хур-кăвакалне тăрантарасси те «майрашăн» ют пулман.

Çак ĕççемпе пĕрлех Алена тĕрĕсем тума та вĕренет ялта. Хăй тĕллĕн. Ăна накам та вĕрентмен. Пĕрре ывăлĕ «Куча мала» телекăларăма пăхнă хыççăн амăшне телевизорпа кăтартнă «пурнăç йывăççине» тума бисер илсе пама ыйтать. Бисерне те илнĕ, канвине те... Çак йывăççем вара паян Николаевсен килĕнчи çӳлĕк çинче тĕп вырăнсенчен пĕрне йышăнаççĕ. Йывăççенчен юлнă бисера ăçта чикес? Тĕрĕ туса пăхма шутлать те вĕсемпе Алена. Нумай аппаланать вазăра ларакан кĕлчечексене «шăрçалас» тесе. Ĕçне вĕçне çитичченех тăвать. «Пăхатăп та хамăн пĕрремĕш тĕрĕ çине, вази пур, чечекĕсем курăнмаççĕ. Кулăшла халĕ», – тет паян тĕрĕ ăсти хăйĕн малтанхи ĕçĕ пирки. Çакăнтан пуçланса каять те илем чирĕ.

Турăшсене те тăрăшсах тĕрлет Алена. Андрей мăшăрĕ

те унăн ĕçне ырлать. Мăшăрĕ валли вăл Мускавран бисерсем яланах туянса килет. Малтан йывăçпа аппаланманскер, Андрей та турăшсем валли киотсем (рамăсем) ăсталама тытăнать. Çак ĕççене тăвасси ăнсăртран пуçланнине ĕненмеççĕ вĕсем. Пĕрре пĕтĕм Раççей Патриархĕ Иккĕмĕш Алексий Шупашкара килсен, çынсемпе тĕл пулнă чух ăнсăртран тенĕ пек Андрей аллине сĕртĕннĕ. Тен çакă пулнă та ĕнтĕ пил пани?..

Халĕ вара Андрейпа Аленăн ĕçĕсем таçта та саланнă. Чăваш Республикин Президенчĕ патĕнче, сăмахран, «Управçă Микулай». Çывăх тăванĕсемпе юлташĕсене те илемлĕ тĕрĕсене пĕтĕм кăмăлтанах парнеленĕ маçтăрсем.

Аленăн тĕррисем темиçе выставкăрах пулнă ĕнтĕ. Пин-пин çынна илем тĕнчипе паллаштарнă вĕсем. Акă ĕнер те, пĕтĕм Тĕнчери хĕрарăмсен уявĕ умĕн, Муркашри историпе краеведени музейĕнче Алена Николаеван ĕçĕсенчен хатĕрленĕ чаплă выставка уçăлчĕ. Кайса кураканcем Муркаш тăрăхĕнче чылаййăн пулаççĕ пулĕ. Пирĕн тăрăхра ал ăстисем сахал мар. Вĕсемшĕн вара, уйрăмах тĕрлеме юратакансемшĕн, ку выставка уяв парни вырăннех пулмалла.

Алена ыттисене те хăйĕн чирĕпе «чирлеттерме» Муркаш пасарĕнче киоск уçнă. Тĕрĕççене мĕн кирлипе тивĕçтерсех тăрать вăл. Сĕнӳ-канашĕсене те шеллемест. Шăрçасен илемĕпе, ăсталăхпа çут çанталăка, чĕр чунсене тĕрлеме темиçе çынна та вĕрентнĕ ĕнтĕ çак хушăра. Килĕнче те хăнасене яланах тарават кĕтсе илекенскер, чей ĕçтермесĕр ăсатса та ямасть. Килекенсем вара вĕсен килĕнчен «музейра пулса куртăмăр» тесех тухса каяççĕ. Питĕ кăмăллă та хастар хĕрарăм. Хăйĕн талантне ялта уçнăскер: «Паян Ваçкасси ялĕсĕр хамăн пурнăçа шухăшлама та пултаймастăп», – тет.

Н. НИКОЛАЕВА.

Судран

Кайран куççуль кăлармалла ан пултăр

Епле хĕрхенместĕн-ха хăвăн мăнукна вăл суд тенкелĕ çине ларчĕ пулсан? Çакăн пек лару-тăру пирĕн районта юлашки вăхăтра уйрăмах анлă сарăлчĕ. Республикăн тĕп хулинче пурăнакан мăнукĕсем аслашшĕ-асламăшĕ патне яла килеççĕ те хăйсен тăван çыннисен укçи-тенкинех тата ытти япалисене вăрласа каялла хулана тухса каяççĕ.

Мĕншĕн сиксе тухать-ха çакăн пек лару-тăру? Хăй вăхăтĕнче çак мăнуксен ашшĕ-амăшĕ вĕсем ялта мĕнле пурăннипе кăсăкланманран.

Тĕслĕхрен, 2007 çулхи декабрь уйăхĕнче Кашмаш ялĕнче пурăнакан асламăшĕ патне мăнукĕ хăнана килнĕ. Малтанах шутласа хунипе çак пӳтсĕрскер тумбочка çинче выртакан «Сименс А52» кĕсье телефонне вăрласа чикет. 2199 тенкĕлĕх япалана ăçта хунине ватă çын манма та пултарать тесе шутланăши?

Ĕçе тишкернĕ чух çул çитмен П. гражданка хăйĕн айăпне пĕтĕмпех йышăнчĕ, вăрă ĕçне тунишĕн те каçару ыйтрĕ. Ĕçпуç капларах пулнипе асламăшĕ те кăтартусем пама хирĕç пулчĕ. Ку Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн 51 статйипе килĕшсе тăрать. Айăплана чух вара суд çак хĕр пĕрремĕш хут япала вăрланине, çул çитменскер пулнине, çав вăхăтрах ниçта та вĕренменнине тата вĕреннĕ юлашки вырăнĕнчен япăх характеристика пулнине те шута хучĕ. Çитменнине тата хĕр час-часах килĕнчен туха-туха кайнă-мĕн. Айăплав вара çапла пулчĕ: 150 сехет обязательнăй майпа ĕçлемелле тата 2199 тенкĕ хĕртен шыраса илмелле.

Пĕлтĕр октябрь уйăхĕнче акă тата тепĕр тĕслĕх пулса иртрĕ. Суд Пиккикассине асламăшĕ патне «канма» килнĕ тепĕр хĕрĕн ĕçне те пăхса тухрĕ. Вăл та кĕсье телефонне çаратнă. Çак Я. гражданка та хăйĕн айăпне йышăннă, ватă çынна кӳнĕ тăкака та хăех саплаштарнă. Айăпа йышăнса районти шалти ĕçсен пайне те çул çитмен хĕр ача хăех пынă. Хĕр ача 2006 çулта 6 класс вĕренсе пĕтернĕ хыççăн ниçта та вĕренмен, анчах ашшĕ-амăшĕ ăна лайăх енĕпе çеç палăртма пултарнă. Çак мăнука суд 2 пин тенкĕ штраф пама йышăннă.

Çакăн пек тĕслĕхсем пирĕн кулленхи пурнăçра ан пулччăр тесен ашшĕ-амăшĕсен ачисене, аслашшĕ-асламăшĕсен мăнукĕсене тимлĕрех пăхса тăмалла. Кайран куççуль кăлармалла ан пултăр тесен, çул çитменнисем вăхăта ăçта тата мĕнле ирттернипе яланах интересленмелле.

Т. САЛДЫРКИНА,
Муркаш районĕн 1-мĕш суд участокĕн мировой судйи.

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

Туслă пурăнаççĕ

Ильинка шкулĕнчи 4-мĕш тата 2-мĕш класра вĕренекенсем хăйсен шкулти интереслĕ пурнăçĕ çинчен хаçата çырса пĕлтерчĕç. «Алăра кĕнеке-тетрадь тытнипе кăна çырлахмастпăр», – теççĕ вĕсем. Акă нумаях пулмасть çак вĕренекенсем хушшинче сăвă вулакансен конкурсĕ иртнĕ. Аслăраххисем, тăваттăмĕшсем, юптарусем шăрантарнă, иккĕмĕшсем вара çут çанталăк çинчен çырнă сăвăсене пăхмасăр илемлĕн вуланă. Даша Щеглова, Валя Васильева тата Настя Иванова çĕнтернĕ. Çакăн евĕр ĕçсем туса ирттерме класс ертӳçине Г.А. Анисована класри библиотекарьсем пулăшса пыраççĕ: Диана Калинина тата Алиса Степанова. Нумаях пулмасть класра «Вулама юратакан çемье» конкурс пулассине те пĕлтернĕ. Халĕ пурте хатăрленеççĕ.

Шашкăлла выляссипе те тăваттăмĕшсем маттур. Хăйсем хушшинче конкурс туса ирттернĕ, иккĕмĕшсене вара выляма хăнăхтараççĕ. Ку ĕçе йĕркелекенĕ Андрей Иванов пулнă. Шашкăлла аван выляканскерĕн, çĕнтерӳçĕ ятне те хăйĕнех илтме тивнĕ. Валя Васильева вара хĕр ачасем хушшинче мала тухнă.

Туслă пурăнаççĕ тăваттăмĕшсемпе иккĕмĕшсем Галина Алексеевна çунатти айĕнче. Хореографи кружокне те çӳреме вăхăт тупаççĕ. Акă районта та нумаях пулмасть иккĕмĕшсем хăйсен ташшипе шкул ятне хӳтĕленĕ. «Йĕлтĕр йĕрĕ – 2009» ăмăртура тăваттăмĕшсем Муркашра тупăшнă.

Класс ертӳçи хавхалантарнипех ĕнтĕ шкулти мероприятисене те тăтăшах хутшăнаççĕ вĕсем. Настя Иванова, Света Яртеева акă шкулти вулавçăсен конкурс çĕнтерӳçисем те пулма ĕлкĕрнĕ, 4-мĕшсенчен – Д. Калининапа В. Васильева. Патриотла сăвăсем вуланă вĕсем. Унта 3-мĕш класри П. Мочаловпа А. Кульков та призерсем пулса тăнă. Пĕрремĕшсем те вĕсенчен юлман – Г. Кульков сăвă вулани пурин асĕнче те юлнă.

Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.

Милици хроникинчен

Хĕрарăм тискерле ĕç тунă

Çак эрне пуçламăшĕнче Вăрманкасси ялĕнчи пĕр çемье, çур çĕр иртнĕ пулсан та, çывăрман. Харкашу тухнă вĕсен килĕнче. Çавна пула тăватă çулхи ывăлĕ те вырăн çине вăхăтра выртман. Арăмĕпе упăшки пĕр-пĕрне темĕн те пĕр каласа пĕтернипе çырлахман, хĕрарăм алла çĕçĕ тытнă. Çак тимĕр япалапа арçынна парăнтарас тесе шутланă вăл. Анчах хăйĕн вăйĕ ытлашшипех пулнă-мĕн: упăшкине хырăмĕнчен, чĕре патĕнчен çĕçĕпе тирнĕ. 50 çулхи арçын тӳрех вилсе кайнă. Ывăлне вара больницăна ăсатма тивнĕ. Амăшĕ, асăрханманнине пула, ăна та çĕçĕпе лектернĕ.

Халĕ çемье пуçĕ – автансăр ялта, амăшне арестленĕ. Ачан вара малаллах пурăнмалла. Çемьери харкашăва вăхăтра пĕр-пĕринпе лăпкăн каласса татса паманнипе çапла пулса тухнă та. 33 çулти хĕрарăм ачи пирки ытларах шутланă пулсан, халĕ тӳпе çине тимĕр решетке витĕр пăхмĕччĕ, хăйĕн пепкин пурнăçне те пăсмĕччĕ.

Мунчаран тырă вăрланă

Районти шалти ĕçсен пайĕн «Шырав» ушкăнĕ çак кунсенче Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан икĕ арçынна тытса чарнă. Çаксем хăйсен ялĕнчи пĕр мунчаран 4 михĕ урпа вăрласа тухнă. Ку мунчара вăрăсен малаpах çăвăнма тӳр килнĕ-ши? Атту тырă миххисем ампарта ларнине ăçтан пăлес?

Çак тĕлĕшпе халĕ уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать. «5-мĕш михĕ ăшĕнче» – 158-мĕш статья.

Президент стипендине тавăрма тивет

Муркашра пурăнаканн пĕр каччă, ЧПУ студенчĕ, пĕлтĕр çулталăк тăршшĕпех аван пурăннă. ЧР Президенчĕн стипендине илнĕ-çке вăл. Анчах çак стипендие суя документсем нумай хатĕрленипе тивĕçни часах тăрă шыв çине тухнă. Халĕ вара пĕр çулта пухăннă 19200 тенкĕне каччăн республика бюджетне каялла тавăрса памалла. Кунсăр пуçне «творчествăлла ĕçлекен çамрăкăн» 159-мĕш статьяпа та паллашма тивĕ. Çапларах «правуррисем» те пур иккен пирĕн район çамрăкĕсем хушшинче.

Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Прогноз погоды с 7 по 14 марта

www.yandex.ru

сб 7	вс 8	пн 9	вт 10	ср 11	чт 12	пт 13	сб 14
облачно, небольшой снег	облачно, небольшой снег	облачно, небольшой снег	облачно, небольшой снег	облачно, небольшой снег	облачно, небольшие осадки	снег	снег
-1 -6	-2 -4	-1 -3	0 -1	0 -1	0 -1	0 -1	0 -1

Пĕлтерӳсем. Объявления

ООО «Интертехсервис»
Проекты, сметы на строительство, газоснабжение и т.д.
Тел.: 62-6-03, 62-1-80; адрес: с. Моргауши, ул. Мира, 9 (здание редакции). 1-3.

ЦЕМЕНТ – М-400
40 кг – 160 руб. 3-5.
«Моргаушагропромснаб»
Тел.: 8-903-346-40-58.

Требуются рабочие в колбасный цех. Оплата сдельная. Адрес: д. Сюрлатри. Тел.: 63-4-10, 8-927-857-96-72.

МИР окон и дверей
- Пластиковые окна
- Алюминевые витражи
- Металлические двери
- Натяжные потолки
- Кованые ограды, ворота
- Профнастил, водоотводящие стоки
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
29-80-60 8-927-669-80-60
Скидка на окна до 25 %.
Весь март шампанское в ПОДАРОК!

ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные, брусья, металл-швеллеры, угольники, трубы, цемент, шифер.
Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58. 5-5.

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150, керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмасса, керамзит. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97. 2-10.

Халăхран лайăх хакпа ĕне, тына, вăкăр ашăн тата чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 2-5.

Продаю пиломатериал: хвоя, береза, осина, дуб. Срубы на заказ. Доставка. Тел.: 8-903-389-14-00. 1-8.

ООО «Строймонтаж» реализует
Блоки керамзитобетонные: пескобетонные:
(390х190х188) СКЦ 1К, 1К(Ш) СКЦ 1Р
перегородочные (390х90х188) СКЦ 2К СКЦ 2Р
камни облицовочные цветные: (250х120х90) СБ-7от14,5р.
колотые (250х90х90) СБ– 7/1 от 14,8 р. СБ-9от10,8р.
Цемент по 40 кг - 190 руб. ФБС, перемычки.
Распродажа продукции II сорта по сниженным ценам. Гибкая система скидок. Примем на работу торговых агентов.
Оплата сдельная. Тел.: (83535)22-0-12, (8352)54-21-77, 8-927-868-04-82 Светлана, 8-927-868-04-26 Дмитрий. 1-2.

Продаю кольца колодезные, гравмассу, песок, керамзит, цемент, КБ 20х20х40, кирпич силикатный, красный. Тел.: 8-902-287-13-29, 8-902-328-02-38. 3-4.

Продаю блоки керамзитобетонные пропаренные, цемент. Дешево, доставка. Тел.: 8-902-328-87-87, 8-902-327-55-65. 9-9.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 06.03.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3860.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.